25-мĕш çул тухать Хакĕ 20 пус

1943 ФЕВРАЛЬ 17 ЮНКУН 38(6275) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ăмăртура мала тухассишĕн!

Çак кунсенче партипе совет тата колхоз активĕн республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу килес çуракине хатĕрленес ыйтусене сӳтсе явнă. Мари республикипе социализмлă ăмăртăва тухса, Чăваш республики обязательствисене йышăнса çирĕплетрĕ. Вăл обязательствăсене эпир хамăр хаçатăн паянхи номерĕнче пичетлесе кăларатпăр.

Тăван республикăсем социализмлă ăмăртăва хутшăнса хамăр çине илнĕ обязательствăсене пирĕн малашнехи ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăмалла. Мĕншĕн тесен çав обязательствăсене халăх лару-тăрăва шута илсе, фронт ыйтнисене ытлăн-çитлĕн тивĕçтересе пырас ыйтусене, кăçалхи ялхуçалăх çулĕн уйрăмлăхĕсене шута илсе хатĕрленĕ.

Илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртме пирĕн пур майсем те пур. Хĕрлĕ Çар отечественнăй аслă вăрçинче чылай фронтсенче ăнăçлă наступлени туса пыни ĕçсыннисене тĕрĕс савăнтарать, вĕсен производствăри активлăхне çĕклет. Ĕçсыннисен çак производствăри активлăхне ялхуçалăх ĕçĕсенче усă курса эпир хамăр умра тăракан задачăсене ăнăçлăн татса пама пултаратпăр. Ку пирĕн тĕп тивĕçĕ те. Çакна тăвас тесен, пирĕн пĕтĕм вăйсене мобилизацилесе пултарни çеç кирлĕ.

Пирĕн республика Мари республикипе пĕрремĕш хут мар ăмăртса ĕçлет. Иртнĕ çул та эпир тăванла республикăпа колхозлă хресченсен ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçласа иртерессишĕн ăмăртса ĕçлерĕмĕр. Çав ăмăртура икĕ республика та чылай ĕçлерĕç. Пирĕн республика ку ăмăртура чылай çитĕнӳсем тума пултарчĕ. Пирĕн республика СССР Оборона Государственнăй Комитетĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илмелли кандидата тăма тивĕçлĕ пулчĕ.

Анчах Мари республики те пирĕнтен кăшт çеç каярах юлнă. Хăшпĕр кăтартусем тăрăх пирĕнтен лайăхрах та ĕçленĕ. Çавăнпа та пирĕн лăпланса ларма юрамасть. Эпир ăмăртура маларах тухас тесен, Мари республикин колхозникĕсен ĕçĕнче пур лайăх опыта тĕпĕ-йĕрĕпе вĕренсе, хамăр ĕçре усă курмалла, пирĕн пур çитменлĕхсене пĕтермелле. Хамăр республикăра чылай колхозсем ĕçе ăнăçлăн туса пынă çинче, хăшпĕр районсемпе колхозсем каярах юлни те пур. Çак каярах юлакансене малта пыракансен шайне çитермелле.

Республикăри ăмăртăва пурнăçлакансенчен вăхăтра обязательствăсене тивĕçлĕ пурнăçласа тăрас ĕçе пурте хутшăнтармалла. Кашни колхоз, кашни бригада, звено хăйне уйрăм обязательствăсем илмелле, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кашни колхозник, колхозница хăйĕн ĕçĕнче тăрăшмалла. Пĕр-пĕрне пулăшса, ăмăртăва аталантарса, ăмăртура çитĕнӳсем тунă колхоз, бригада, звено опычĕпе анлă усă курмалла. Çавăн чухне çеç ăмăрту кирлĕ усă парать.

Районсемпе колхозсем тата уйрăм колхозниксем умĕнче тăракан задачăсене канашлу тĕплĕн сӳтсе явнă. Вăл задачăсене пурнăçа кĕртмелли мелсене те палăртнă. Çав задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыма кашни колхозник, колхозница, МТС-семпе совхозсен кашни работник, ялхуçалăхĕнчи кашни специалист ăмăртура мала тухас кăмăлпа çунса ĕçлени кирлĕ, фронт умĕнчи, Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыв умĕнчи хамăрăн тивĕçлĕхе туйса ĕçлени кирлĕ.

Партипе комсомолăн вырăнти организацийĕсен, политотдел работникĕсен халĕ массăллă ĕçе анлăн сарса ярас пулать. Партипе совет тата колхоз активĕн республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине, пирĕн республика хăй çине илнĕ обязательствăсене кашни колхозникпа колхозница патне çитермелле, тĕплĕн ăнлантарса памалла, вĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла.

Социализмлă ăмăрту ялавне çӳле çĕклер, пирĕн республикăпа Мари республики хушшинчи ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешер!

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем ХАРЬКОВ хулине йышăнса илнĕ

Февралĕн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, татăклăн штурмланă хыççăн тата хаяррăн çапăçнă хыççăн, ХАРЬКОВ хулине йышăнса илнĕ.

ХАРЬКОВ хулишĕн пынă çапăçусенче пирĕн войскăсем нимĕçсен «Адольф Гитлер» тата «Райх» ятлă нимĕç танковăй дивизийĕнчен, «Великая Германия» ятлă мотодивизийĕнчен тăракан «СС» корпусне, çавăн пекех тата нимĕçсен пехотнăй дивизийĕсемпе специальнăй чаçĕсене чылайăшне çĕмĕрсе тăкнă.

ХАРЬКОВ хулине ирĕке кăларас тата вăл районра противника çĕмĕрсе тăкас ĕçе генерал-полковник **Ф. И. ГОЛИКОВ** юлташ командир пулса ертсе пыракан войскăсен группин вăйĕпе пурнăçа кĕртнĕ.

ХАРЬКОВШĂН пынă çапăçусенче генерал-лейтенант К. С. МОСКАЛЕНКО юлташăн, генерал-лейтенант П. С. РЫБАЛКО юлташăн, генерал-майор М. И. КАЗАКОВ юлташăн тата генерал-майор С. В. СОКОЛОВ юлташăн соединенийĕсем уйрăмах палăрнă.

ХАРЬКОВА чи малтан генерал-майор Г. М. ЗАЙЦЕВ юлташăн, полковник А. С. КОСТИЦЫН юлташăн, генерал-майор С. С. МАРТИРОСЯН юлташăн чаçĕсем вăрканса кĕрсе кайнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Эпир, Чăваш республикинчи партипе совет тата колхоз активĕн канашлăвĕнче пулнисем, Сире, СССР халăхĕсен çулпуçне тата Хĕрлĕ Çарăн аслă полководецне, ырă сунса хĕрӳллĕн саламлатпăр тата Сирĕн пата большевикла салам яратпăр!

Пирĕн тăван çĕршыв умне пысăк хăрушлăх тухса тăнă кунсенче чăваш халăхĕ Ленинăн — Сталинăн аслă партийĕ тавра татах та ытларах пĕтĕçрĕ, вăл хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе хăватне нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас ĕçе парать. Чăваш халăхĕн вуншар пин ывăлĕсем мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăшмана хирĕç паттăррăн та хăюллăн çапăçаççĕ. Чăваш республикинчи колхозлă хресченсем, тăван çĕршыв кунçулĕшĕн хăйсен ответлăхне туйса, Эсир çĕршывпа фронт валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай тата промышленность валли чĕртавар туса пама чĕннине пурнăçа кĕртсе пырса, хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлесе, иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Иртнĕ çулта ялхуçалăхĕ малалла ӳссе тĕрекленчĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, республикăри колхозсем тырпул акăнакан çĕр лаптăкне 47 пин гектар чухлĕ анлăлатрĕç. Çуракине 1941 çултинчен 15 кун малтан, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе 20 кун малтан вĕçленĕ. Чи кирлĕ ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе государство пană плана пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртнĕ. Республикăри тĕштырă культурисене вăтам шутпа кашни гектартанах 13,5 центнер туса илнĕ. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене те 1941 çултинчен чылай нумайрах пухса илнĕ.

Нумай колхозсем иртнĕ çулта кашни гектартан 100-шер пăт тырă туса илчĕç. Вăрнар районĕнчи Ленин орденлĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхоз гектартан 116 пăт тĕштырă, Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим“ колхоз—111 пăт, Елчĕк районĕнчи „Марс“ колхоз—100 пăт тырă туса илнĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Наркомюст ячĕпе тăракан колхоз гектартан 183 пăт пăрçа пухса илнĕ. Кувакино районĕнчи „Ударник“ колхозри Тюрина юлташ звени гектартан 518 пăт махорка туса илнĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри Ерошина юлташ звени пĕр çул ӳсекен кок-сагызăн тымарĕсене гектартан 55 пăт пухса илнĕ. Пирĕн республикăра çакăн пек примерсем сахал мар.

Колхозсен пĕрремĕш тивĕçне пурнăçа кĕртсе, Чăваш республикинчи колхозсем 1942 çулта государствăна тырă памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕç. Колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе пурнăçланă. Мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 44,9 процент чухлĕ, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 78,9 процент, сыснасен хисепĕ 35,5 процент чухлĕ ӳсрĕ.

Чăваш республикинчи ĕçсыннисем танксен колоннисемпе боевой самолетсен эскадрильисене тума 62 миллион тенкĕ ытла пачĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен личнăй запасĕнчен Хĕрлĕ Çар фондне 120 пин пăт ытла тырпул, нумай аш-какай, пахча-çимĕçсем тата ытти продуктсем пачĕç.

Анчах эпир хамăрăн пур майсемпе те усă курнă, мĕн тума пултарнине пурне те тунă тесе калама пултараймастпăр. Эпир нумай ытларах тума пултаратпăр. Фронта пулăшассине пирĕн кашни кунах вăйлатса пымалла. Пирĕн хамăрăн ĕçре тăван çĕршывăн паттăр воинĕсенчен юлас мар тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

1943 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту организацилесси çинчен Горький облаçĕнчи колхозниксем панă сĕнĕве ырласа, эпир хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1943 çулти мартăн 1-мĕшĕ тĕлне çураки валли вăрлăхсем хатĕрлес ĕçе вĕçлемелле; тракторсене, ялхуçалăх машинисемпе ĕç инвентарĕсене пурне те апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерсе пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитермелле; 1.500.000 тонна тислĕк, 500.000 тонна торф тата 10.000 тонна кĕл пухса хатĕрлесе турттарса тухмалла. Механизаторла кадрсем 1.800 çынран кая мар, колхозсен ертсе пыракан кадрĕсене 4.500 çынран кая мар вĕрентсе хатĕрлемелле, çавăн пекех тата звеньеводсене, яровизаторсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсене тата колхозри ытти кадрсене вĕрентсе хатĕрлемелле. 1942 çулпа танлаштарсан, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне 10 процент чухлĕ ӳстермелле; мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепне 25 процент, сыснасен хисепне 22 процент, сурăхсемпе качакасен хисепне 21 процент чухлĕ ӳстермелле. Тăрантаракан кашни ĕнерен республикăри колхозсенче вăтам шутпа 1.200 литртан кая мар сĕт суса илмелле, кашни сурăхран 2,5 килограмран кая мар çăм касса илмелле, 100 сурăхран 115 путек тата кашни сыснаран 12 çăвăр илмелле. Ĕçлеме пултаракан кашни колхозник çулталăкра 250 ĕç кунĕнчен кая мар ĕçлесе тумалла.

Илнĕ обязательствăсем пире тата организованнăрах пулма, ĕçе пĕтĕм вăя хума хушаççĕ.

Эпир Сире, **Сталин** юлташ, икĕ çыншăн, виçĕ çыншăн ĕçлĕпĕр тесе, çапла вара хамăрăн обязательствăсене пурнăçа кĕртĕпĕр тата фронта пур майсемпе те пулăшăпăр тесе шантарса калатпăр.

Сывă пултăр пирĕн тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕшĕн, чыслăхĕшĕн тата ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç тата полководец, тăван атте тата учитель **Сталин** юлташ!

1943 çулта государствăн ялхуçалăх ĕçĕсенчи тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне лайăхрах пурнăçа кĕртессишĕн Мари АССР-пе пыракан социализмлă ăмăртура Чăваш АССР-ĕ хăй çине илнĕ

ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ

«Пирĕн пĕрремĕш тĕллев — хамăрăн территорисемпе хамăрăн халăхсене нимĕçсен фашистла пусмăрĕнчен ирĕке кăларасси пулса тăрать. Анчах çакна тума пирĕн çарпа пирĕн флота хамăрăн пĕтĕм çĕршыв енчен ĕçлĕн те активлăн пулăшса пыни кирлĕ; пирĕн рабочисемпе служащисем, арçынсемпе хĕрарăмсем, предприятисенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронта валли танксем, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, хăйсен уйхирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтпа çĕршыв валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн пĕтĕм çĕршыв тата ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем организациленсе пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ, пирĕн çарпа тата флотпа пĕрле хамăр тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн, нимĕç çарĕсене çапса çĕмĕрессишĕн ирĕклĕхлĕ аслă вăрçă туса пыракан лагерь пулса тăни кирлĕ» (Сталин).

Чăваш АССР-чи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, Сталин юлташ фронтпа тăван çĕршыва—тырпул аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах пама чĕнсе каланипе хавхаланнăскерсем, нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах çапса аркатас ĕçре хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшу парса тăрас шухăшкăмăлпа çунса, 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕнче хăйсен уйхирĕсенче вăя хĕрхенмесĕр ĕçлерĕç, колхозсене хуçалăхпа организацилĕх тĕлĕшĕнчен малалла çирĕплетсе пырас, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес тата обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç.

Иртнĕ çулта Чăваш республикинчи колхозсем гектартан 13 центнер ытларах тырпул туса илчĕç, государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç, мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепне 44,9 процент, сыснасен хисепне—35,5 процент, сурăхсемпе качакасен хисепне—78,9 процент чухлĕ ӳстерчĕç.

Машинно-тракторнăй станцисем вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, лайăхрах ĕçлерĕç тата кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа иртнĕ çултинчен 70 гектар ытларах сухаларĕç, тырпула комбайнсемпе вырса пуçтармалли плана 128 процент пурнăçа кĕртрĕç.

Анчах та тырпул тухăçлăхне ӳстерес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсем—вĕсем лăпланса лармалли виçе мар-ха, фронт пиртен — ялхуçалăх продукчĕсем, промышленность вара—чĕртаварсем ытларах та ытларах туса пама ыйтаççĕ.

1943 çулта государствăн ялхуçалăх ĕçĕсенчи тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне лайăхрах пурнăçа кĕртессишĕн Мари АССР-пе социализмлă ăмăртăва тухса, Чăваш АССР-чи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи работниксем тата ялхуçалăхĕнчи специалистсем хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илеççĕ:

1. 1943 çулта ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне 10 процентран кая мар ӳстермелле.

2. Çав задачăна пурнăçа кĕртме çакăн пек мероприятисем туса ирттермелле:

а) уйхире 1 миллион та 500 пин тонна тислĕк, вăл шутран хĕллехи вăхăтра 1.000.000 тонна тислĕк кăлармалла;

б) удобрени валли 500.000 тонна торф хатĕрлесе турттарса кăлармалла;

в) 100.000 центнер кĕл хатĕрлемелле;

г) ирхи тĕштырăсене 8—10 кун хушшинче акса пĕтермелле;

д) тĕштырă культурисене 100.000 гектар çинче тата çĕрулмине 7.000 гектар çинче яровизациленĕ вăрлăхсемпе акмалла;

е) кĕрхи тырăсемпе çуртырри калчисене 25.000 гектар çинче апатлантарса хăвармалла.

3. Тракторсене, вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене тата лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарĕсене—апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне, комбайнсемпе молотилкăсене тата тырпул пухса кĕртмелли ытти ялхуçалăх машинисене июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса çитермелле.

4. Государствăн тракторсемпе ĕçлемелли планне пурнăçа кĕртмелле, кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа вăтамран 360 гектар ĕçлемелле, кашни комбайнпа 110 гектар вырса пуçтармалла тата кашни трактор молотилкипе 450 тонна тĕштырă çапса пуçтармалла. Тракторсен ĕçĕн хăйне ларакан хакне тата горючи расходне 5 процент чухлĕ чакармалла.

5. Утăсене тырпул пухса кĕртес ĕçсем пуçланиччен 10—15 кун малтан çулса пуçтармалла.

6. Кĕрхи тырăсене—10 кун хушшинче, çурхи тырăсене 15 кун хушшинче вырса тата çулса пĕтермелле.

7. Кĕлтесене капана хывас ĕçе вырма пуçланă хыççăн 5-мĕш кунĕнче тытăнмалла, вырса пĕтерсен 10 кунран кая хăвармасăр капана хывса ĕлкĕртмелле.

8. Тырпулсене вырма пуçланă хыççăн 3—5-мĕш кунĕнче авăн çапма тытăнмалла тата ноябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр çапса пĕтермелле.

9. Вăрлăхлăх акнă курăксене çулнă хыççăнах çийĕнчех çапма тытăнмалла, 20 кун хушшинче вара çапса пĕтермелле.

10. Кĕрхи тырăсене августăн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр акса пĕтермелле.

11. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене пурне те срокчен пурнăçа кĕртмелле.

12. Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли тата выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне ӳстермелли планне кашни колхоз тăрăх уйрăммăн пурнăça кĕртмелле тата мăйракаллă шултăра выльăхсен йышне 25 процент, сыснасен йышне — 22 процент, сурăхсемпе качакасен йышне — 21 процент чухлĕ ӳстермелле.

13. Кашни фуражлă ĕнерен вăтамран 1.200 литртан кая мар сĕт суса илмелле, кашни сурăхран вăтамран, 2,5 килограмм çăм касса илмелле, кашни 100 сурăхран 115-рен кая мар путек илмелле тата кашни сысна аминчен вăтамран—12 çăвăртан кая мар илсе çитĕнтермелле.

14. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕçсем çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хумалла, 120.000 тоннăран кая мар силос хывса хăвармалла.

15. Çураки пуçланиччен механизаторла кадрсем 1.800 çын вĕрентсе хатĕрлемелле, кĕске вăхăтлăх курссем организацилесе, вĕсенче колхоз председателĕсене, счетоводчĕсене, уйхир бригадисен бригадирĕсене тата выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсене 4.500 çынна вĕрентсе кăлармалла, çавăн пекех тата звеньеводсене, пахча-çимĕç акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекенсене, яровизаторсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсене тата колхозсен ытти тĕрлĕ кадрĕсене вĕрентессине йĕркелемелле.

Кăçалхи çул вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпула туса илессишĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине малалла ӳстерсе пырассишĕн районсем, МТС-сем, совхозсем, колхозсем, бригадăсем, звеносем тата колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем хушшинчи ăмăртăва анлăн сарса ярар.

Икĕ çыншăн, виçĕ çыншăн ĕçлĕпĕр, хамăр çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурăпăр.

Партипе совет тата колхоз активĕн канашлăвĕ хушнипе обязательствăсем çине çаксем алă пуснă:

Чарыков — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Матвеев** — Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ, **Андреева** — Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ, **Белков** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Ахазов** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Серов** — ЦК ВКП(б) çумĕнчи Парти Контроль Комиссин Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ, **Крылов** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Репкин**— ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Никитин** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Андреев** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Кузьмин** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Бобров** — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Белолипецкий** — ЧАССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ, **Малов** — ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ, **Мартынов**— ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕ, **Чернов** — Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Политсектор начальникĕ, **Евламьев** — ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ, **Романова**—ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ, **Михайлов П.**—ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ, **Коротков** — ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ, **Караушев** — ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ, **Михеев** — Елчĕк МТС политотделĕн начальникĕ, **Яшин** — Елчĕк МТС директорĕ, **Васянин** — Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, **Скворцов** — Шăхасан райсовет исполкомĕн председателĕ, **Ширманова** — Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз колхозници, **Гордеев** — Красноармейски районри «Янмурзино» колхоз тимĕрçи, **Тюрина** — Кувакино районĕнчи «Ударник» колхозри махорка енĕпе ĕçлекен звеньевой, **Драгункина** — Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз доярки, **Балденкова** — Кувакино МТС-ĕнчи хĕрарăмсен трактор бригадин бригадирĕ, **Григорьева**—Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» колхозри пăрусене пăхакан, **Гордеева** — Елчĕк МТС трактористки, **Михайлов** Çĕмĕрле МТС комбайнерĕ, **Смирнова** — ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн секретарĕ, **Калинцев** — Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн директорĕ.

Колхозсене машинăсем юсама пулăшать

СЕНТЕРВАРРИ. Ивановăри кирпĕч заводĕнче ĕçлекен ватă тимĕрçĕ Александр Яковлевич Лебедев юлташ заводра хăйĕн ĕçне пысăк пахалăхпа туса панă хушăрах колхозсен ялхуçалăх машинисене те юсать. Лебедев юлташ иртнĕ çул заводра кивĕ тимĕрпе усă курса тимĕре икĕ тонна ытла перекетлесе хăварнă. Пысăк мастер вăл кирек мĕнле машинăна та юсама пултарать. Вăл иртнĕ çул заводри ĕçсене туса пынă вăхăтрах Паникасси тата Ольдикасси ялсоветĕнчи колхозсене машинăсем юсаса панă.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозсен ответлăхĕ пысăккине шута илсе, Лебедев юлташ кăçал та кохозсене машинăсем юсама пулăшать. Халь вăл «Шордан» колхозăн машинисене юсать.

Ф. Ильин.

Фронтовиксем валли—парнесем

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа фронтовиксем валли парнесем пухас ĕç республикăра пысăк çĕкленӳпе пулса иртрĕ. Республикăра пĕтĕмпе 15 тоннăна яхăн аш-какай, 3.787 килограмм колбаса, 2.500 килограмм çу, 2.058 килограмм пыл, 1.698 килограмм премĕк, 4,5 тонна табак 15.500 çăмарта, 3.000 литр ытла эрех, 41 тонна тулă çăнăхĕ, 13,8 тонна кĕрпе, типĕтнĕ пахча-çимĕçсем, çĕрулми, канфеткăсем т. ыт. апат-çимĕç нумай пухăннă.

Кунсăр пуçне фронтовиксем валли ĕççыннисем 4.500 уйрăм посылкăсем хатĕрлесе панă.

Çаксене пурне те 10 вагон сине тиесе фронта ăсатнă.

* * *

ÇЕМĔРЛЕ, январĕн 15-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).** Районри ĕççыннисем геройла Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем патне уяв ячĕпе парнесем ячĕç. Боецсем валли пурĕ 741 килограмм аш-какай, 55 килограмм çу, 31 килограмм пыл, 437 килограмм кĕрпе тата ытти нумай продуктсем ячĕç. Кунсăр пуçне боецсем патне уйрăм посылкăсем пурĕ 190 янă, вĕсем пĕрле 930 килограмм туртаççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем боецсем патне 116 килограмм аш-какай, 29 килограмм типĕтнĕ çĕрулми, 70 килограмм йӳçĕтнĕ купăста тата ытти кучченеçсем ячĕç. Мехлесопункт коллективĕ фронта 40 посылка ячĕ. Вăл посылкăсенче эрех, супăнь, питшăллисемпе сăмса тутрисем тата боецсене куллен кирлĕ ытти япаласем пур.

Мускав облаçěнчи комсомол активěн тата ялхуçалăхěнче малта пыракан çамрăксен канашлăвě

Февралěн 13-мěшěнче Союзсен Çуртěн Колоннăй залěнче Мускав облаçěнчи комсомол активěн тата ялхуçалăхěнче малта пыракан çамрăксен канашлăвě пулса иртнě.

Комсомолпа çамрăксен 1943 çулхи ялхуçалăх ěçěсенчи задачисем çинчен ВКП(б) Мускав комитечěн секретарě Максимов юлташ доклад туса панă. Унăн доклачě тăрăх прение ВЛКСМ горкомěсемпе райкомěсен секретарěсем, колхоз председателěсем, трактористсем, звеньевойсем, политотдел начальникěсен комсомол енěпе ěçлекен помощникěсем сăмахсем туса каланă.

Канашлура М. И. Калинин юлташ сăмах каланă. Калинин юлташа тăвăллă оваци туса кěтсе илнě. Канашлура пулнисем унăн сăмахне пысăк тимлěхпе итленě.

Юлашкинчен канашлура ВЛКСМ Центральнăй Комитечěн секретарě Михайлов юлташ сăмах тухса каланă.

Канашлура пулнисем колхозсемпе совхозсенчи тата МТС-сенчи мěнпур комсомолецсемпе çамрăксем патне уçă çыру яма йышăннă. Çав çырура çуракине ăнăçлăн хатěрленсе иртерессишěн, пысăк тухăçлă тěштырăсемпе пахча-çимěçсем туса илессишěн большевикла кěрешме чěнсе каланă.

Мускав облаçěнчи комсомолецсем Горький облаçěнчи ялти çамрăксене социализмлă ăмăртăва тухма чěннě.

Канашлура пулнисем Сталин юлташ патне яма çырнă салама çавтери пысăк хавхаланупа йышăннă.

(ТАСС).

М. И. Калинин юлташăн сăмахě

Юлташсем, юлашки уйăхсем хушшинче Хěрлě Çар фронтра чылай пысăк çитěнӳсем турě.

Çав çитěнӳсем вěсем Хěрлě Çарăн лайăх хěçпăшал пурринчен кăна мар, унăн командирěсем хастарлă та пуçарулла пулнинчен кăна мар, унăн боецěсем хамăрăн тăван çěршывшăн хăйсен пурнăçне хěрхенмесěр кěрешнинчен кăна мар килнě,—ку пахалăхсем пирěн çарăн халиччен те пулнă. Пирěн Хěрлě Çара юлашки вăхăтра палăртса тăракан çěнě пахалăх вăл — унăн организованноçě ӳсни пулса тăрать. Пирěн çар çапăçусен опытне туянчě. Çавăнпа та ěнтě унăн çěнтерěвěсем вěсем — хастарлăхпа паттăрлăхăн результачěсем кăна мар, пулса тăраççě, — унăн çěнтерěвěсем ӳссе çитěннě организованность çинче никěсленсе тăраççě. Боецсемпе командирсем çапăçура пěлӳлěх туянчěç, материаллă вăйсене сахал тăкакласа пысăк результатсем çěнтерсе илме вěренсе çитрěç.

Халě вăрçă вăхăтěнчи иккěмěш ялхуçалăх çулне хăйсен пысăк йышěпе хутшăнакан ялти комсомолецсем умěнче те, вăя сахал тăкакласах пысăк результатсем çěнтерсе илес шутпа, организованно пулма вěренсе çитес задача тăрать. Паллах, комсомолецсен çамрăклăха тивěçлě пек вăй-хăватпа хавхалану вěресе тăрать. Çак паха енсем çамрăксен пур. Анчах этемěн вăрахăн çитěнсе пыракан пěр пахалăх пур, çакă вăл — организованно пулма хăнăхасси, кашни ěç валли организациллě чи лайăх формăсем тупма пěлесси.

Вěсене мěнле тупмалла-ха, тесе ыйтма пултараççě. Çавăн çинчен кěнекесенче тупма йывăр. Шкулсенче те пирěн организациллě практикăна вěрентмеççě, унăн меслечěсемпе уйрăм деталěсене кăна мар, унăн тěп принципěсене те вěрентмеççě. Организациллě хăнăхусене çынсем ěçре, опытра туянаççě.

Ялхуçалăх ěçěсене иртернě çěрте пирěн пěлтěр мěнле çитменлěхсем пулнине шута илмелле. Унчухне эпир хамăрăн ěç вăйне кирлинчен ытларах тăкакланă. Çавăн пек тăкаксем тăвас мар тесен, иртнě çулхи ěçе шута илмелле.

Калăпăр, пěр-пěр ěçе тума эпир çав ěç ыйтнинчен вăя икě хут ытларах тăкакларăмăр. Паллах, эпир задание çěр процентпа тултарнине кура, пире лайăх ěçленě тейěç. Анчах та вăя ахаль нумай пěтерни шел.

Юлташсем, çамрăксен задачи мěнпур ялхуçалăх ěçěсене мěнле те пулин лайăхрах пурнăçа кěртессинче кăна мар тăрать. Çакăнпа пěрлех çамрăксем хăйсене аслисен вырăнне йышăнма хатěрлеççě, çавна валли çамрăксен вăйне сыхласа хăварни кирлě. Ěçе çапла йěркелемелле: ěç те вěресе тăтăр тата культура тěлěшěнчен аталанма та вăхăт юлтăр.

Мускав облаçěнчи комсомолецсем хăйсен мěнпур пěлӳлěхне хурěç те кăçалхи çул та ялхуçалăх ěçěсен планěсене пурнăçа кěртěç кăна мар, çавăн пекех тата чылай пысăк организациллě опыт та пухěç.

Организациллě опыт, организаторăн хăнăхăвě, çакă вăл — этемěн чи паха енěсенчен пěри. Çакă вăл сире ялхуçалăхěн çěнě çулě лартакан тěллевсене пурнăçа кěртме кăна мар кирлě, çакă вăл сире малашне те кирлě, вăл сирěн пурнăçра питех те пысăк вырăн йышăнса тăрě.

Организациллě опыт сире кирек мěнле задание те пурнăçа кěртесси патне мěнле ансатрах пымалли çинчен каласа парать, çак паха ен сире ӳлěм кирек мěнле ěçре те пулăшса пырě.

Сирěн умра вăрçă вăхăтěнче те, вăрçă хыççăн та çавтери пысăк ěç тăрать. Çав ěç сиртен нумай вăй кăна мар ыйтать, çавăнпа пěрлех вăл тата хăвăрăн вăйăрпа мěнле те пулин пěлсе те усăллăрах усă курма ыйтать.

Мускав облаçěнчи комсомолецсемпе çамрăксен çакна вěренсе çитмелле те ěнтě.

Мускаври тата Мускав облаçěнчи комсомолецсене вăй-хăвата сахалтарах тăкакласах çěнтерӳ тумалли çавăн пек опыта туянма сунасшăн эпě. Çакăнта ăнăçу тума пултарсан, эсир вара партин заданийěсене те, Сталин юлташăн заданийěсене те пурнăçа кěртетěр. (Тăвăллăн алă çупаççě. Пурте ура çине тăраççě).

Хěрлě Çар 25 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йěлтěрлě кросс

Кросăн малтанхи кунěнче стартра 3.050 çын пулчě

ÇĚМĚРЛЕ, январěн 15-мěшě. (Хамăр корр.). Ěнер, профсоюзпа комсомолăн Пěтěм Союзри йěлтěрлě кросěн малтанхи кунěнче, стартра 3.050 çын пулчě. Кросс ирхине 10 сехетре уçăлчě. Виçě километрлă дистанцине чи малтан Çěмěрлери 3-мěш номерлě вăтам шкулта вěренекенсем кайрěç. Вěсем кроса лайăх хатěрленнě. Тренировкăллă занятисене тăтăшах иртерни, йěлтěрпе çӳреме лайăх вěренни вěсене асăннă дистанцие ăнăçлăн тухма май пачě. Шкултан кроса 247 вěренекен хутшăнчěç, вěсенчен 90 проценчě дистанцие отлично чупса тухрě. Зоя Басирова, Роза Мадьян, Михаил Стеклов пионерсем икě километрлă дистанцине 11—12 минутăра чупса тухрěç.

Кроса комбинатра ěçлекен рабочисем активлăн хутшăнаççě. Çамрăксем çеç мар, ватăрах рабочисем те хутшăнаççě. Малтанхи кун стартра комбинатран 536 çын пулчě. Вěсенчен 357-шě нормăна ăнăçлăн пачěç. Рабочи стахановецсем Пантелеймонов, Храмов, Павлов, Стеклов юлташсем 10 километрлă дистанцине 52 минутăра кайса килчěç.

Кросăн малтанхи кунěнче БГТО значок нормине пурě 1.038 вěренекен ача, ГТО значок нормине 630 комсомолец пачěç.

Кунта кроса хатěрленмен

ШАХАСАН. («Хамăр корр», телефонпа). Районри организацисем йěлтěрлě кроса тивěçлипе кěтсе илмен. Малтанхи кун пурě 1.015 çын хутшăнмаллаччě, анчах мěнпурě те 232 çын кăна хутшăннă. Район центрěнче 150 çынран кая мар хутшăнмалла пулнă пулсан, мěнпурě те 28 çын çеç хутшăннă.

ВЛКСМ райкомěн секретарě В. Иванов район кроса начар хатěрленнин сăлтавне: «Çанталăк начар пулчě тата йěлтěрсем çитмеççě», тесе ăнлантарать. Кросс пуçланиччен çеç-ха Иванов юлташ «пирěн йěлтěрсем çителěклě, йěлтěр çине тăма тивěçлě çынăн кашниннех йěлтěр пур», тенěччě. Çанталăк начар пулнă пирки кроса хутшăнманни—сăлтав мар. Ку сăмахсене райком секретарě калани пушшех те вырăнсăр. Йěлтěрçě валли начар çулйěр çук, япăх çанталăк пулма пултараймасть. Йěлтěрçěсен çулйěрсěр, куç курми тăманлă çанталăкра та çӳреме пěлмелле.

Совет Информаци Бюровěнчен

Февралěн 15-мěшěнчи каçхи пěлтерӳ

Февралěн 15-мěшěнче Украинăра пирěн войскăсем **Краснодон** хулине, **Успенка** ятлă район центрне, **Лутугино** ятлă пысăк чугунçул станцине, **Верхне-Дуванная** ятлă чугунçул станцине тытса илнě.

Ростов облаçěнче пирěн войскăсем **Родионово-Несветайское** ятлă район центрне тата **Кутейниково, Большие Салы** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнě.

Орел облаçěнче пирěн войскăсем **Дросково** ятлă район центрне тата халăх пурăнакан ытти пунктсене тытса илнě.

Фронтăн ытти участокěсенче пирěн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

Баренц тинěсěнче пирěн карапсем тăшманăн пěтěмпе 19.000 тонна водоизмещениллě 2 транспортне путарнă.

* * *

Февралěн 14-мěшěнче пирěн авиаци чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинăна çити пěтерсе тăкнă е сиенленě, артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, тăшманăн боеприпассем хунă 2 складне сирпěнтерсе янă.

* * *

Красный Сулинран хěвеланăçнерехре пирěн войскăсем çапăçса пырса малалла кайнă, нимěç захватчикěсенчен халăх пурăнакан 30 пункта тасатнă. Пěр аэродромра нимěçсен 2 юсавлă самолетне тытса илнě. Н-ски чаçăн боецěсем нимěç пехотине пěр батальона çити вěлерсе пěтернě, нимěçсен 4 танкне персе çěмěрнě, 6 орудине, 2 миномета тата боеприпассем тиенě 28 автомашинине тытса илнě.

* * *

Ворошиловскран кăнтăр-хěвеланăçнерехре пирěн войскăсем малалла тапăнса пынă. Н-ски часть тăшмана халăх пурăнакан пысăк пунктран хăваласа кăларнă, 200 гитлеровеца пěтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнě, вěсем хушшинче 12 оруди, 31 автомашина, боеприпассен склачě тата хěçпăшалсен склачě пур.

* * *

Красноармейское районěнче пирěн войскăсем вăйлăн çапăçса малалла тапăнса пынă. Тăшман темиçе хут контратака тунă, анчах та çав контратакăсене тăшмана пысăк çухатусем тӳстерсе сирсе янă. Н-ски чаçăн боецěсем 18 паровоз, 500 вагон, 1.500 автомашина, 100 мотоцикл, продовольстви склачě тата ытти трофейăсем те тытса илнě. Тепěр участокра тăшманăн пехоти танксем пулăшса пынипе контратака тунă. Лейтенант Костров ертсе пыракан батарейăн артиллерисчěсем орудине уçă позицие илсе тухнă та тӳрремěнех тěллесе персе нимěçсен 7 танкне тата 2 бронемашинине персе çěмěрнě.

Грецун юлташăн подразделенийěнчи гвардеецсем нихăçан манми чапа тухнă. Тăшманăн тěреклетнě темиçе точкине тытса илнě хыççăн вěсем гитлеровецсен темиçе хаяр атакине сирсе янă. Фашистсем фронт енчен пырса контратака тунă вăхăтра вěсен 26 танкě автоматчиксем лартса пирěн фланга, рота командирěн политика енěпе ěçлекен заместителě Поляков юлташ ертсе пыракан взвод хӳтěленě фланга пырса тухнă. Лару-тăру питех те хăрушланса кайнă, анчах та пирěн 17 гвардеец тăшмана хăюллăн хирěç тăнă. Çапăçăвăн малтанхи минутисенчех нимěçсен 8 танкне персе вут тивертнě. Танмар çапăçура пирěн 17 гвардеец вилсе выртнă, анчах та вěсем хăйсен боевой задачине чыслăн пурнăçа кěртнě. Вěсем тăшманăн пěр танкне те иртерсе яман, çапла вара хăйсен чаçне малалла ăнăçу тума, гитлеровецсене каялла сирсе яма май панă.

* * *

Чугуев районěнче пирěн войскăсем хěрӳллěн наступлениллě çапăçусем туса пынă. Н-ски соединенин чаçěсем эсэсовецсен умлăн хыçлăн тунă виçě контратакине сирсе янă. Çапăçу хирěнче тăшманăн темиçе çěр вилли тата персе çěмěрнě 6 танкě выртса юлнă. Тепěр участокра пирěн танкистсем тăшманăн колоннине аркатса тăкнă, 17 оруди, 100 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнě.

* * *

Англире тухакан «Дейли экспресс» хаçат хăйěн Стокгольмри корреспонденчěн çакăн пек пěлтерěвне пичетленě: «Вырăс фронтěнчен эсэсовецсен темиçе дивизине илсе кайнă. Хăшпěр çынсем шутланă тăрăх, пěтěмпе 40 дивизине илсе кайнă... Çав чаçсене вěсене Германие тата оккупациленě çěршывсене яраççě».

«Дейли экспресс» хаçатăн корреспонденчě çапла калани чăнлăха пěтěмпех хирěçлесе тăрать. Совет Информаци бюровě 1943-мěш çулхи январěн 31-мěшěнче çапла пěлтерчě: нимěç командованийě хěвеланăçěнчен ěлěкрех илсе килнě войскăсемсěр пуçне ноябрь вěçěнчен пуçласа Хěвеланăçěнчен Совет Союзěпе Германи хушшинчи фронта тата 19 пехотнăй дивизипе 3 танковăй дивизи илсе килнě, çав шутран 11 дивизие Германирен, 11 дивизие — Францирен, Бельгирен тата Норвегирен илсе килнě. Кунсăр пуçне, ун чухне нимěçсен 9 дивизийě çул çинче пулнă. Январěн 31-мěшě хыççăн нимěçсен çав 9 дивизийěнчен 6-шě Совет Союзěпе Германи хушшинчи фронтра çапăçнине палăртнă. Францирен Совет Союзěпе Германи хушшинчи фронта январěн 31-мěшě хыççăн килнě дивизисен номерěсемпе ячěсем çаксем: 711-мěш, 335-мěш, 257-мěш тата 333-мěш пехотнăй дивизисем, эсэсовецсен «Рейх» тата «Адольф Гитлер» ятлă танковăй дивизийěсем. Совет войскисем нимěçсен çав соединенийěсене пысăк сиен кӳнě, çав пур дивизисенчен те темиçешер çынна тыткăна илнě.

Совет Союзěпе Германи хушшинчи фронтра хăйěн ěçěсене юсаса ярас тесе, нимěç командованийě Францирен тата оккупациленě ытти çěршывсенчен çěнě дивизисем илсе тухса вěсене Хěвелтухăçне ярать. «Дейли экспресс» хаçат чăнлăхпа пěрех те килěшсе тăман пěлтерӳ пичетлесе общественноçа — улталас тесе-и, çук-и—улталать.

Февралěн 16-мěшěнчи ирхи пěлтерӳ

Февралěн 16-мěшě ыран тенě чух çěрле пирěн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллě çапăçусем туса пынă.

* * *

Шахты хулинчен хěвеланăçнерехре пирěн войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 20 пункта тытса илнě. Тăшман хыçалахри рубежсенче тытăнса тăма тăрăшать, анчах та совет чаçěсем гитлеровецсен планěсене арпаштарса яраççě, вěсене çапа-çапа аркатаççě, хěвеланăçнелле хăвалаççě. Халăх пурăнакан пěр пунктшăн пынă çапăçура нимěç мотопехотин батальонне пěтерсе тăкнă. 30 автомашина, 11 противотанковăй оруди тата пулеметсемпе автоматсем нумай тытса илнě.

* * *

Лихая хулинчен хěвеланăçнерехре пирěн чаçсем наступлениллě çапăçусем туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнě. Нимěçсен 44 танкне, 233 грузовой тата 65 çăмăл автомашина, 150 вагон, 21 паровоз, взрыв тăвакан япаласен складне, боеприпассен складне, запаслă пайсен складне тата инженерла пурлăх складне тытса илнě.

* * *

Ворошиловскран кăнтăр-хěвеланăçнерехре Н-ски часть нимěçсен 400 салтакěпе офицерне çити пěтерсе тăкнă, хăй тěллěн çӳрекен 2 оруди, 3 миномет тата 13 пулемет тытса илнě. Тепěр участокра тăшман пирěн подразделенисене хирěç пехотăн пысăк группине тата темиçе танк янă. Совет боецěсем нимěçсене çил-тăвăллăн персе кěтсе илнě. Çапăçу хирěнче персе çěмěрнě 3 танкне тата хăйсен 120 виллине пăрахса хăварса, гитлеровецсем каялла чакнă.

* * *

Чугуевран хěвеланăçнерехре пирěн войскăсем наступлениллě çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн боецěсем тăшман оборонин узелне кěрсе кайнă та трофейăсем тытса илнě тата тыткăна илнě. Тепěр участокра пирěн подразделенисем малалла кайнă, тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, 11 танк тата 300 нимěç автоматчикне çити пěтерсе тăкнă.

* * *

Курск облаçěнчи районсенчен пěринче кěрешекен партизансен отрячě юлашки вăхăтра аэродромсенче тăшманăн 14 самолетне пěтерсе тăкнă, 7 поезда ӳпěнтерсе янă.

Карел-Финн ССР-ěнчи районсенчен пěринче кěрешекен партизансен «За родину» ятлă группи тăшманăн гарнизонне сасартăк тапăннă та унăн 35 салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă. Пěр орудие тата боеприпассен складне сирпěнтерсе янă, пěр прожектора çěмěрнě. Партизансен тепěр ушкăнě 75 белофина вěлернě, 3 казармăна çунтарса янă тата инçе перекен 2 орудие стройран кăларнă.

* * *

Германин информаци бюровě çапла пěлтернě: «Фронт линине кěскетес шутпа план тăрăх куçса пырса, Краснодар хулинчен тухса кайнă», тенě. Çав тери нумай суйнипе аташса кайнă гитлеровецсем çапла хăтланнă пирки нимěçсем пěлтěрхи августра Краснодара тытса илнě чухне мěн çырнине аса илсен вырăнлă. Берлинри радио 1942 çулхи августăн 10-мěшěнче çав тери хěпěртесе пěтěм тěнчене çакăн пек пěлтернěччě: «Хěвелтухăçěнчи фронтра юлашки 24 сехет хушшинче вăрçă мěнпе пěтес ěçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан событисем пулса иртрěç. Советсене тата çěнěрен питě вăйлăн пырса çапнă, çапла пырса çапнин результачěсене хальхи вăхăтра чăннипе пěлсе çитме те çук-ха. Германи войскисем Краснодара тата Моздока тытса илчěç. Çав промышленноçлă икě питех те пысăк хулана çухатни вăрçăри пěтěм лару-тăрăва нумай улăштарě», тенěччě.

Çапла ěнтě, çур çул каялла гитлеровецсем Краснодара илни «вăрçă мěнпе пěтес ěçре питě пысăк вырăн йышăнě» тенě. Хăйсем каланă тăрăх вăрçă тěлěшěнчен çав тери паха пулса тăракан хуларан «фронт линине кěскетес» шутпа хăйсен ирěкěпе тухса кайнă тесе каланине паян кам ěненě-ха ěнтě? Тата çакна та аса илме юрать: нумаях та пулмасть нимěçсем Германия Майкопра нефть кăларать ěнтě, тесе мухтаннăччě. Нимěç хаçачěсемпе радио Берлинра тунă «Кавказ табакне ěçлесе хатěрлекен общество» çинчен тата çавăн пек ытти бандитла организацисем çинчен нумай çырнă, нумай каланă. Гитлеровецсем Кавказпа Кубаньре чăннипех тата нумайлăха вырнаçса ларма шутланă. Анчах та çакă вěсенчен килмест иккен.

„Вырăссене мухтав!“

Ростова тата Ворошиловграда илни çинчен США-ра мěн çыраççě

НЬЮ ИОРК, февралěн 15-мěшě. (ТАСС). Хěрлě Çар Дон çинчи Ростова тата Ворошиловграда илни çинчен пěлсенех Америкăри мěнпур радиостанцисем ун çинчен мěнпур çěршыва пěлтернě. Чи пысăк радиостанцисем çавăн çинчен пěлтермешкěн хăйсен программисене пама чарăннă.

Америкăри мěнпур радиостанцисен радио тăрăх ăнлантарса паракан сотрудникěсем çакна палăртаççě: Хěрлě Çар Дон çинчи Ростова илни Германи çарне çапса аркатассине пěлтерекен тепěр факт пулса тăрать.

Çар информацин бюровě пěлтернě тăрăх, сенатор-демократ Пеппер (Флорида штатěнчен суйланнăскер) çапла каланă: совет войскисем Ростова илни çинчен калакан хыпар питě те савăнăçлă хыпар пулса тăрать. „Фашистсен усал ěçěсен никěсě хăвăрт ишěлсе пырать, гитлеровецсен пěтěм çурчě силленсе тăрать. Атьăр тăшмана çěнěрен пыра-пыра çапар! Вырăссене мухтав!“

„Ростова ирěке кăларни,—тенě сенатор-демократ Томас (Утах штатěнчен),—питě чаплă çěнтерӳ пулса тăрать, вăл мěнпур цивилизациллě çынсен чěрине хастарлăх кěртет. Ростова илме тата Германи армийěсене Кавказра аркатса тăкма пулăшнă çар генийě пире мěн тери тěлěнтерсе хěпěртеттернине сăмахпа каласа пама та май çук. Хěрлě Çарăн хěллехи наступленийě тата ак çакăн пирки питě чаплă пулса тăрать: ăна Гитлер çěнтерӳ манăн алăра ěнтě тесе мухтанса каланă хыççăн пуçласа янă. Эпир, американецсем, тата ирěклěхе юратакан ытти халăхсем пурте вырăс халăхне тата Совет Союзěн хěçпăшаллă вăйěсен Верховный Главнокомандующине салам яратпăр. Пирěн президент Сталин патне янă хăйěн саламěнче каланă пек, вырăс халăхě хăйěн примерěпе пěрлешӳллě нацисене пирěн пěрлехи тăшмана татăклă поражени тӳстермешкěн, ăна пěр условисěрех парăнтармашкăн çěнěрен хытă тăрăшма хушса тăрать“.

Америкăра тухакан хаçатсем Хěрлě Çар малалла тапăнса пыни çинчен, вăл малашне мěнле аталанасси çинчен çаплах нумай çыраççě. Атлантра (Георгий штачě) тухакан „Конститюшн“ хаçат Хěрлě Çарăн çěнтерěвěсем çинчен çапла çырать: вěсем Германи çарěн наступлени тăвас хăватне чакарнăçемěн чакарса пыраççě, тет. Хаçат союзниксене Германи çарне çапса аркатас ěçе часрах вěçлемешкěн Хěрлě Çарăн наступленине вăйлăн пулăшма чěнет.

Ют çěршывсенче

АНГЛИ АВИАЦИЙĚ КЕЛЬНПА МИЛАНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, февралěн 15-мěшě. (ТАСС). Авиаци министерстви пěлтернě тăрăх, февралěн 15-мěшě ыран тенě чух çěрле Англи самолечěсем пысăк операцисем туса иртернě. Вěсем пуринчен ытла Кельнпа Милана вăйлăн тапаннă. Кельн çине бомбăсем 30 минута хушши пăрахса тăнă. Тăшманăн зенитнăй артиллерийě ěлěкхинчен сахалтарах активлăх кăтартнă, анчах сывлăша унăн нумай истребителě хăпарнă. Хула çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем нумай пăрахнă.

Миланра вăйлă пушарсем тухнă. Милан вăл хăйěн пысăкěшěпе Италире иккěмěш хула пулса тăрать. Унта пěр миллион çын ытла пурăнать. Милан вăл Италин чи паха транспорт центрěсенчен пěри пулса тăрать. Апла пулин те хулана сывлăшран тапăнассинчен начар хӳтěленě. Италин истребителěсем те сывлăша хăпарман.

Çав операцисенчен Англин 11 самолечě хăйсен базисене таврăнман.

Ěнер кăнтăрла Англи бомбардировщикěсем Çурçěр Францири тата Голландири темиçе чугунçул объектне атакăланă.

Нумай паровоза сиенленě.

Мальта утравě çинче тăракан самолетсем Италири, Тунисри тата Сицилири чугунçул объекчěсене хаяррăн атакăланă. 40 паровоза пěтерсе тăкнă е сиенленě.

ÇУРÇĚР АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ ĚÇĚСЕМ

ЛОНДОН, февралěн 15-мěшě. (ТАСС). Официальнăй йěркепе пěлтернě тăрăх, ěнер Тунисри фронтра патрульсем кěрешнě.

Союзниксен авиацийě Бизертăри доксем çине тата ытти паха çар объекчěсем çине бомбăсем пăрахнă. Сывлăшри çапăçусенчен пěринче тăшманăн 4 истребительне персе ӳкернě. Туниспа Сицили хушшинче тăшманăн 6 транспортнăй самолетне пěтерсе тăкнă.

Тăшманăн танкěсемпе пехоти тата артиллерийě пикировка тăвакан бомбардировщиксем пулăшса пынипе Фаидран хěвеланăçнерехре атакăланă.

Британи войскисем тинěс хěррипе хěвеланăçнелле малалла куçнă.

СОЛОМОН УТРАВĚСЕН РАЙОНĚНЧИ ÇАПĂÇУСЕМ ÇИНЧЕН ТĚПЛĚНРЕХ ПĚЛТЕРНИ

НЬЮ-ЙОРК, февралěн 15-мěшě. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пěлтернě тăрăх, Америка авиацийě февралěн 10-мěшěнче Японин 3 эсминецне путарнă, 4 эсминецне сиенленě. Японин ытти икě эсминецне вěсем Япони войскисене Гвадалканар утравěнчен илсе кайма пулăшса тăнă вăхăтра атакăланă.

Çěнě Георгий утравě районěнче пěр вăхăтрах 20 эсминеца атакăланă. Сывлăшри çапăçусенче Японин 17 истребительне персе ӳкернě.

—⊙—

Пěлтерӳ

Февралěн 18-мěшěнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомěн Парткабинечěнче (Чувашская ур., 6) агитаторсемпе докладчиксем валли лекци пулать. Лекци теми: **«Гитлерла Германие тата Европăри унпа пěр каварлă çěршывсене хирěç пыракан вăрçăра Хěрлě Çарпа совет халăхě умěнче тăракан задачăсем».**

Лекцие ВКП(б) горкомěн лекторě **Давтян** юлташ вулать.

ВКП(б) Горкомěн Парткабинечě.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Чăваш АССР Совнаркомě çумěнчи Кинофикаци Управленине халех çакăн пек ěçсен мастерěсем кирлě: киноопераци аппаратурине тӳрлетекенсем, радиоусилительнăй аппаратурăна тӳрлетекенсем, шалта çуннипе ěçлекен двигательсене тӳрлетекенсем, электроток генераторěсене тӳрлетекенсем, токарьсем, слесарьсем, вěренекенсем; склад заведующийě тата бухгалтерсем кирлě.

Ěç укçине ěçленě тăрăх тӳлеççě. Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Ленин урамě, 21, ЧАССР Совнаркомě çумěнчи Кинофикаци Управленийě.

Военторга Канашра ěçлеме çакăн пек работниксем кирлě: бухгалтерсем; подсобнăй хуçалăхсем валли рабочисем, çěвěçсем (хăйсен машинисемпе пěрле).

Çак адреспа ыйтмалла: Канаш хули, Военторг.

Чăваш ЧАССР Коопинстрахкассине çак работниксем кирлě: старши бухгалтер, счетовод тата ěç сыхлавěпе хăрушсăрлăх техникин инспекторě.

Занятий вăхăтěнче çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Максим Горький ур., 32.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарěн—4—26, промышленность пайěн—3—99, ялхуçалăх пайěн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 649 Типография № 1. Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58.84 п.